**Хресченěн ěç кăшăлě пěрлехи уява çаврăнчě**

# Кěр мăнтăрě кашнинех савăнтарчě, çěнě шухăш çуратрě



ЧР Президенчě Н. Федоров ěç паттăрěсене чысланă самант.

Район центрěнче вара Тыр-пул уявне халалланă пасар кěрлерě те кěрлерě. Акă выльăх-чěрлěх ěрчетессипе те, ӳсен-тăран отрасльне аталантарассипе те палăрса тăракан “Свобода” хуçалăх икě машинăпа илсе тухнă купăста патěнчен юлашки купăста пуçě сутăнса пěтиччěнех халăх татăлмарě. Кашмашсем пасара çитсен уйрăм сутуçăсем тунă хак та (килограмм купăсташăн 10 тенкě) тытăнса тăраймарě. Халăх “Свобода” хуçалăхăн 5 тенкěллě продукцийě çине тăрăнчě. “Ударник” хуçалăхран илсе тухнă суханпа купăста, Е. Андреев ячěпе хисепленекен хуçалăх сутакан аш-какай, “Моргаушская” чăх-чěп фабрикинчен илсе пынă çăмартапа ытти продукци патěнчен те, “Моргаушкорм” тата Муркашри сěт-çу завочě сутă тăвакан вырăнсенчен та халăх татăлмарě. Çав вăхăтрах уява-пасара пынисем сухан, кишěр, хěрлě кăшман тупса илеймерěç. Çак кун суту-илӳ лаптăкěнче пěрлешӳллě хуçалăхсенчен “Хлебороб”, “Волга”, “Агроурожай”, “Чемеево”, Чкалов яч. хис., “Лидер” хуçалăхсем те пулнă пулсан, çак ыйтусен пěр пайě татăлěччě, анчах... Уяв вěсемсěрех иртсе кайрě. Çав вăхăтрах уйрăм çынсем килти хушма хуçалăхсенчен илсе тухнă улми-çырли те, улма-çырла хунавěсем те, курăк вăррисемпе аш-пăш та ăнăçлă сутăнчě.

Район центрěнчи Спорт çуртěнче çак кун ěçленě тыр-пул выставкине кěрсе курман çын та юлмарě пулě. Мěн пултараççě пирěн хуçалăхсем – йăлтах витринăсем çинче. Вěсемпе çумаçумăнах вырнаçнă райпо магазинěсем те хăйсен ăсталăхěпе çак кун вуншар çынна савăнтарчěç. Акă “Моргауши-Хлеб” чикěллě яваплăхлă обществăн çăкăр пěçерес технологě Людмила Замкова кăтартакан хăйсем пěçернě тулăх карçинкка, Мăн Сěнтěр райповěн Москакассинчи “Илем” кафе буфетчици Елена Малинова аллинчи тěтěмленě те илемлетнě хурсем, Зинаида Петрова повар кăтартакан-паллаштаракан “Моргаушская” чăх-чěп фабрикин витринисем, “Передовик” хуçалăхăн аслă поварě Эльвира Терентьева пěçернě “чěрě сысна çури” никама та хăйсем патěнчен хăвăрт ирттермерěç.

Çак вăхăтра район администрацийěн пěрремěш çумě А. Иванов иртнě ял хуçалăх тапхăрне хакласа доклад туни, малта пыракансене район администрацийěн Хисеп грамотисемпе тата дипломсемпе чыслани уяв илемне ӳстерчě кăна.

– Эпир кăçал ěçлени пирěн татах та тухăçлăрах ěçлеме майсем пуррине кăтартса пачě. Çакна пурнăçлама “АПКна аталантарасси” наци проекчě те, çěршыв ытти енпе пулăшма пулни те вăй-хал парать. Çапла тăвасчě те, –терě хăйěн сăмахěнче Альберт Николаевич.

Çакнашкал мал туртăмлă сăмахсем уявăн тěп сăнарě пулчěç.

**А. БЕЛОВ.**



**Çăкăр асамачě уяв илемě тата пуянлăх палли пулчě.**



**Суворов яч. хис. хуçалăхри И. Михайлова РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивěçрě.**



**“Ударник” хуçалăхăн профком председателě Л. Николаева РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине илнě хыççăн.**



**“Герой” хуçалăхри В. Иванов механизатор ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивěçлě пулчě.**



**Муркашри сěт заводěнче склад заведующийěнче ěçлекен М. Сазонова ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе тата хаклă парнепе.**




**Тыр-пул уявě тата спорт. Юнкă ял тăрăхěнчи В. Михайлов кире пуканě йăтассипе палăрчě.**

**Спорт**

# Муркашра – Раççей спорт мастерě

Октябрěн 10-14-мěшěсенче Хусанта бокс енěпе Раççей шайěнчи мастерсен турнирě иртрě. Çěршывăн тěрлě кěтесěсенчен пухăннă 120 боксер ăмăртăва çӳллě шайра ирттерме хăват пачěç. Çак сумлă турнира Чăваш Республикинчен 7 боксер хутшăнчě пулсан, вěсенчен 3-шě Муркашран пулни пирěншěн питех те пěлтерěшлě. Каламалла, виçě çамрăк боксер та район администрацийěн вěрентӳпе çамрăксен политикин пайě çумěнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулěнче пуçлăмăш утăмсем тунă. Кашниех бокс вăрттăнлăхěсене алла илессипе 9 –10 çул ăсталăх пухать. Усăсăр та мар. Акă асăннă ăмăртăва хутшăннă çак шкул воспитанникěсем С. Черкашин (57 кг виçере), А. Никитин (54 кг виçере), А. Тимофеев (60 кг виçере) ырă кăтартусем кăна тунă. Сергей финалта Хусан боксерне выляса ярса иккěмěш вырăн çěнсе илнě. Андрей вара çурма финалта Раççей спорт мастерне очкосемпе выляса ярса виççěмěш вырăн йышăннă. Вěсен юлташě Александр Никитин вара ăнăçуллăрах кěрешнě. 1988 çулта çуралнă яш паян Раççей çарěнче Самарăри сывлăшçар вăйěсен тěп спорт клубěнче службăра тăрать, спортри ăсталăха малалла туптать.



**Бокс енěпе Раççей спорт мастерě Александр Никитин.**

– 9 çул ěнтě эпě боксра. Çак спорт тěсне мана пичче илсе кěртрě, С. Черкашин тренер пуçламăш ăсталăх пачě, аталану çулě уçрě. Тавах ăна уншăн тата паян та юнашар пулнишěн. Халě хам суйласа илнě çулшăн пěрре те иккěленместěп, – терě мастер турнирěнчен Чăваш Республикинчен пěччен бокс тěсěпе Раççей спорт мастерěн нормативне пурнăçласа таврăннă Александр Никитин. Районта спортăн çак тěсěпе ку шая çитнě пěрремěш спортсменăн амăшě “Россельхозбанк” ěçченě, ашшě – водитель. Петр Николаевичпа Галина Геннадьевна ывăлěн ӳсěмěпе мухтанаççě кăна.

Сергей Васильевич Черкашинăн бокс секцине паян 43 ачапа яш çӳреççě. Кашниех хаваспах тěрлě ăмăртусене хутшăнать, ӳсěмсен çулне такăрлатать. Малти сыпăкри çӳлерех асăннă боксерсем вěсемшěн ырă тěслěх пулса тăраççě. А. Никитин – уйрăмах. Сергейпа Андрейăн та кăçалхи декабрьте Раççей çарне службăна каймалла. Çак тивěçе пурнăçлама хатěр теççě паян вěсем.

### Аслисенчен юлмаççě

Хăйсен пушă вăхăтне спорта халалланă çамрăксен самантлăх та кану çук. Акă çӳлерех каланă ăмăрту хыççăнах октябрěн 18-21-мěшěсенче Саратов облаçěнчи Волынск хулинче бокс енěпе пěтěм Раççейри турнир иртрě. Унта Раççейăн тěрлě регионěсенчен хутшăннă 176 боксер хушшинче пирěн районтан кайнă 5 боксертан тăракан команда та хутшăннă. Хутшăннă та хăйěн ятне çӳллě шайра кăтартнă.

Çамрăксем хушшинче Николай Скворцовпа (44 кг) Алексей Илларионов (38 кг) пěрремěш вырăнсем, Стас Филипповпа (42 кг) Е. Ярухин (40 кг) иккěмěш вырăнсем çěнсе илнě. 18 çултан аслăраххисем хушшинче ăмăртса Чуманкассинче пурăнакан Андрей Павлов (60 кг виçе йывăрăшěнче) пěрремěш вырăна тухнă.

**Анатолий БЕЛОВ.**



**Бокс ăмăртăвěсенче яланах хăйсене çӳллě шайра кăтартакан тата паян Шупашкарти Олимп резервěсен училищинче вěренекен Андрей Тимофеевпа (сулахайри) Сергей Черкашин çамрăк боксерсем хăйсен тренерěпе С. В. Черкашинпа. “Çитес çул эпир те Раççей спорт мастерěн нормативне пурнăçлăпăр”, – шантарса калаççě вěсем юлташě çине шурă ăмсанупа пăхса.**

**Автор сăн ӳкерчěкěсем.**

**Хушма хуçалăх**

# Пан улми çинчен сěнӳсем

Пан улми сěткенě чěрешěн, çавăн пекех ăс-тăнпа ěçлекен тата аслă ăрури çынсемшěн те питě усăллă. Çапах та тин кăна кăларнă сěткен усăллăрах. Енчен те сирěн çакна валли ятарлă аппарат çук пулсан, шултра терка витěр е комбайнпа вěтетме пулать. Ăна вара икě хут марля витěр сăрăхтармалла. Сěткенне кăларас умěн пан улмине лайăх çуса тасатмалла.

Пěчěк ачан шăлěсем шăтнă чухне пан улмин хытă сорчěсем питě вырăнлă. Ăна кăшланă май, шăл тунисем хăйне евěр ěç пурнăçлаççě. Ӳссе çитěннě шăлсене пан улми аван тасатать. Унта С витамин нумай пулни шăл тунинчен юн тухассине чарать. Çу кунěсенче çумăр ытларах çуни витамина ытларах пухăнма май парать.

Çулталăкне пирěн 60 килограма яхăн пан улми çимелле тесе палăртаççě тěпчевçěсем. Çак çимěçе пула организм çителěклě таран сахăр, органикăлла кислотасем, минераллă тата ытти веществосем илме пултарать.

Халăх медицининче чěрě пан улмие тата унтан хатěрленě чее апат лайăхрах ирěлме, ӳслěке çемçетме, ревматизм, пӳре, авитаминоз, мигрень чирěсене çăмăллатма усă курнă. Пěçернě пан улмие вар-хырăм хытсан çинě. Шыçăна чакарма, пиççе кайнă тата шăнтса янă ӳте ӳт илтерме чěрě пан улмипе усă курнă. Çывăрма выртас умěн пан улми çини лăпкă ыйха путма май панине мěн авалах пěлнě. Апла пулсан кашни кун пан улми çиессине йăлана кěртмелле. Çавăн чухне сирěн йывăрлăхсем самай çăмăлланěç.

**Вулакан пултарулăхě**

# Ватăсене ыр сунатăп

***Автортан. Кăçал 15-мěш хут Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунне иртерчěç. Аслă ăрури çынсене шута хунишěн çěршыв ертӳçисене пысăк тав. Эпир курнине çамрăксен курмалла ан пултăрччě çеç.***

Пирěн çулти ачасем
Пулнă салтак ачисем.
Вăрçă пынă вăхăтра
Туйман хăйсене ютра.
Çывхарнисем çитмěле,
Çитмěл урлă каçнисем
Тата ытти ватăсем –
Аса илӳ çăмхисем.
Кам манайě ашшěне
Ăсатнине вăрçăна.
Хěрěх пěрремěш çулне,
Ăшри ěмěр сурана.
Чылай яш-хěр ирěкпе
Туй юррине юрлас чух
Салтак юрри юрласа,
Тутăр сулса. Ах анчах...
Çунчěç хула та ялсем,
Çӳлте тěтěм алхасса.
Выльăх-чěрлěх пуçěсем
Тăшман кăна турттарса.
Çěр те çитмěл миллион
Совет Союз халăхě
Пулчě те пěр шухăшлăн,
Тухрě çěршыв хӳтлěхне.
Станоксем ларса тулта
Хěрěх градус сивěре.
Пирěннисем ěçлесе –
Парăнман вěсем ěçре.
Кăнтăрла ěçленисем
Кайнă каçпа вěренме.
Вуншар фабрик-заводсем
Вăрçă чухне çěкленсе.
Çурлапала тыр вырса,
Киле килмен каçхине
Кěлте çинче çывăрса –
Тутлă курса тěлěкне.
Ой, чăнах та, вăй-халне
Эсир пěртте хěрхенмен.
Усаллине шутламан,
Ватăласса ěненмен.

**В. ПАВЛОВ, ěç ветеранě.**
Турай ялě.